ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 9 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи чӗк уйăхĕн 30-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 3, 6, 9, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 3, 4, 10, 11 №-сем; 2017, 2–4, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 25-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) 9 статйине улшăну кĕртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"**9 статья. Граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсакан ĕçсем туни**

1. Чăваш Республикин Чăваш Республикин территорийĕнче граждансене шăплăхпа тата канлĕхпе тивĕçтерессипе çыхăннă хутшăнусене йĕрке-

лекен саккунĕпе (малалла – шăплăх çинчен калакан саккун) пăхса хăварнă ĕçсене (ĕçсем туманни), вĕсем шăплăх çинчен калакан саккунпа палăртнă вăхăт тапхăрĕсенче граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсасси патне илсе çитернĕ, тунăшăн –

асăрхаттараççĕ е граждансене – пĕр пин тенкĕрен пуçласа икĕ пин тенкĕ таран; должноçри çынсене – икĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă административлă правăна тепĕр хут пăснăшăн –

граждансене – икĕ пин тенкĕрен пуçласа виçĕ пин тенкĕ таран; должноçри çынсене – пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вунă пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене вун пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вăтăр пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

Асăрхаттарни. Шăплăх çинчен калакан саккунпа килĕшӳллĕн граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсасси патне илсе çитерекен ĕçсем (ĕçсем туманни) тесе хытă кăшкăрашнине, тăпăртатнине, шăхăрнине, юрланине, музыка инструменчĕсемпе усă курнине, шакканине, сĕтел-пукана куçарнине, строительствăпа монтаж, строительствăпа юсав, тиевпе пушатмалли ĕçсем туса ирттернине, сасă кăларакан тата сасă вăйлатакан хатĕрсене (радиоприемниксене, магнитофонсене, телевизорсене тата ыттисене), çав шутра транспорт хатĕрĕсем, балконсем тата чӳречe янаххисем çине вырнаçтарнисене, вăйлă сасă кăларттарса усă курнине, транспорт хатĕрне харпăрлăхра тытакан (хуçа) транспорт хатĕрĕн ĕçлесе кайнă хурал сигнализацине сӳнтерес енĕпе мерăсем йышăнманнине, Раççей Федерацийĕн çуллĕр хăрушсăрлăхĕ çинчен калакан нормативлă право акчĕсемпе пăхса хăварман тĕслĕхсенче транспорт хатĕрĕн сасă сигналĕсемпе усă курнине, килти чĕр чун хуçи килти чĕр чуна вĕрме, улама тата килти чĕр чун кăларакан ытти шăв-шава чарас енĕпе мерăсем йышăнманнине, пиротехника хатĕрĕсемпе усă курнине калаççĕ.

Çак статья положенийĕсем правăна пăснисене чарса лартас тата сирсе ярас, аварие, хăй тĕллĕн пулакан инкексене, чрезвычайлă ытти ларутăрăва сирес тата ун сиенне пĕтерес, граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтернипе е халăхăн пурнăç условийĕсене тивĕçтерекен объекчĕсем ĕçленипе çыхăннă пĕр тăхтамасăр пурнăçламалли ĕçсене тăвас тĕллевпе, тĕн йăли-

йĕркисене тата церемонийĕсене ирттернĕ чухне тăвакан ĕçсемпе, çавăн пекех патшалăх влаçĕн органĕсем е вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ирĕк панипе культурăллă-массăллă мероприятисем, спорт тата массăллă ытти мероприятисем ирттернĕ чухне тăвакан ĕçсемпе, Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăснисем çинчен калакан кодексĕпе правăна пăснăшăн административлă яваплăх пăхса хăварнă ĕçсемпе, Çĕнĕ çул уявне раштав уйăхĕн 31-мĕшĕнче, 22 сехетрен пуçласа кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 4 сехетчен ирттерессипе пурнăçлакан ĕçсемпе çыхăннă ĕçсене тăвас тĕллевпе граждансем, должноçри çынсем тата юридически сăпатсем пурнăçлакан ĕçсене пырса тивмеççĕ.".

2 статья

Çак Саккун 2024 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет те 2030 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕччен (кĕртсе) вăйра тăрать.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕ
92 №